Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

7 (7861) № * Юн кун, 2011 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 2-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Умра – çĕнĕ тĕллевсем

**Учитель çулталăкне вĕçлесе**



***Эсир сăн ӳкерчĕкре вĕрентӳ учрежденийĕсенче ертсе пыракан канашсен «Паянхи шкул ашшĕ-амăшĕн куçĕпе» конкурсĕнче çĕнтернисене куратăр. Сулахайран сылтăмалла: Орининти вăтам шкул директорĕн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ И. Григорьева, Шомикри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул директорĕ Т. Майорова, Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул директорĕ К. Спиридонов, Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул директорĕн вĕрентӳпе воспитани енĕпе ĕçлекен çумĕ А. Албутова.***

**А. БЕЛОВ**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Учитель çулталăкне вĕçлесе иртнĕ эрне кун Муркашри вăтам шкулта савăнăçлă уяв иртрĕ. Çулталăк пĕтĕмлетĕвĕ. Мĕнлерех пулчĕ-ха вăл пирĕн районти педагогсемшĕн? Малашнехи утăмсем тата мĕнпе çыхăннă? Çак тата ытти чылай ыйту хускатрĕç вĕрентӳ ĕçченĕсем.

Уяв район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов Раççейри вĕренекенсен олимпиадин муниципаллă тапхăрĕн çĕнтерӳçисемпе призерĕсене хатĕрленĕ учительсене чысланинчен пуçланчĕ. Йӳçкассинчи вăтам шкулта истори, обществознани тата право предмечĕсене вĕрентекен В.И. Тихоновăн 16 вĕренекенĕ, Орининти вăтам шкулти физкультура учителĕн С.И. Алексеевăн 10 вĕренекенĕ, çак шкултах историпе обществознани урокĕсене ертсе пыракан В.И. Алексеевăн 8 вĕренекенĕ, Муркашри вăтам шкулти информатика учителĕн О.К. Волковăн 6 вĕренекенĕ, ку шкулти биологи учителĕн В.Н. Ивановăн 6 вĕренекенĕ, Çатракассинчи вăтам шкулти технологи учителĕн М.М. Димитриевăн 6 вĕренекенĕ тата Муркаш лицейĕнчи хими предметне вĕрентекен Н.В. Казаковăн 6 вĕренекенĕ район шайĕнче палăрнă.

Шетмĕпуçĕнчи тĕп шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен И.В. Раевская та ĕçри ăнăçусемшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕнчен Тав çырăвĕ илме тивĕçрĕ.

Шкул коллективĕсем Учитель çулталăкĕ мĕнле иртнине массăллă информаци хатĕрĕсенче çутатса тăрассипе те тимлерĕç иртнĕ çул. Конкурс çĕнтерӳçи Чуманкассинчи шкул коллективĕ пулчĕ. Призлă вырăнсене Йӳçкассинчи тата Юнкăри вăтам шкулсем тивĕçрĕç.

Районти педагогсем хăйсен ăсталăхне ӳстерессипе нумай тимлеççĕ. Çавăнпах уявра Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ учителĕсем, Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕсем пирки те асăнмасăр хăвармарĕç. Çамрăксен вĕсенчен тĕслĕх илмелле-çке-ха.

Çамрăксем тенĕрен. Иртнĕ çул Л.В. Ванюшкина, П.В. Борзаев тата С.Н. Цветкова çамрăк педагогсем ЧР Президенчĕн стипендине илсе тăракансем пулчĕç.

2010 çулта Чăваш Республикин Президенчĕн грантне çĕнсе илнисем те пур педагогсен ретĕнче: С.И. Алексеев (Оринин шкулĕ), А.Ю. Герасимова (Турай), Л.А. Ядыкова (Ярапайкасси), Н.А. Порфирьева («Путене» ача сачĕ). Çакă, паллах, учительсен ĕçлес туртăмĕ пысăк пулнине палăртать.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**«Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн»**

## Ыр кăмăллă пулăр

Республикăра пуçланнă «Ачалăх ячĕпе, ачалăхшăн» ыр кăмăллăх марафонне тунти кунранпа Муркаш районĕ те хутшăнма тытăнчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ А.Е. Андреева ку ыйтăва эрнесерен иртекен тунти кунхи планеркăра сӳтсе явнине пĕлтерчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. А. Иванов администраци ĕçченĕсене хăйсен пĕр кунхи ĕç укçине марафон счечĕ çине куçарма шаннине ыйтса чĕнӳ те хатĕрлерĕ. Çак чĕнĕве (район сайтĕнче паллашма пултаратăр) районти пур предприятире, организацисенче, учрежденисенче, ял тăрăхĕсенче ĕçлекенсем те тимсĕр хăвармасса шанатпăр. Мĕншĕн тесен пирĕн районта та пулăшмалли ачасем нумай.

Районти хӳтлĕх пайĕн специалисчĕсем пĕлтернĕ тăрăх январĕн 1-мĕшĕ тĕлне нумай ачаллă çемьесем районта пурĕ 409 шутланаççĕ. Вĕсенче пĕтĕмпе 1326 ача ӳсет. Сахал тупăшлă çемьесем – 1908. Тулли мар çемьесем те сахал мар – 945. Ачасен шучĕ çакăн пек çемьесенче 1281. Инвалид ачаллă çемьесем 105.

Çапла вара ачасене укçа-тенкĕпе пулăшас текенсен укçа суммине республика счечĕ çине куçармалла. Марафона ял тăрăхĕсенче те активлă хутшăнасса шанатпăр. Кăçал çи-пуçпа пулăшас текенсем вĕсене ял тăрăхĕсене илсе пырса пама пултараççĕ. Япалисем вара шăпах çак ял тăрăхĕнчи пулăшу кирлĕ çемьесене çитĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Йышăну**

## Ĕçлĕ пуху

Район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи январĕн 27-мĕшĕнчи 41 № йышăнăвĕпе районăн 2010 çулхи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетессипе пуху ирттереççĕ. Унта ĕç коллективĕсен представителĕсемпе ентешлĕх членĕсене чĕнеççĕ.

Пуху февралĕн 16-мĕшĕнче райадминистрацин ларусен залĕнче иртет.

**Йыхрав**

## Йĕлтĕр çине тăрар!

Çитес вырсарни кун, февралĕн 14-мĕшĕнче, пирĕн районта та, çĕр-шывăн чылай субъекчĕсенчи пекех, «Раççейĕн йĕлтĕр йĕрĕ – 2011» чупу иртет. Çак массăллă старт ырă йăлана кĕчĕ темелле.

Акă пĕлтĕр районта пĕтĕмĕшле 700-е яхăн йĕлтĕрçĕ ăмăртăва хутшăннă: пурте мала тухассишĕн мар, чун ыйтнине тивĕçтерессишĕн те. Районти стартăн 2010 çулхи çĕнтерӳçисем Çатракассинчи вăтам, Кашмашри тĕп шкулсен тата «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин командисем пулнăччĕ. Районти чи вăйлă йĕлтĕрçĕсем вара Шупашкар хулинчи масстарта хутшăнчĕç. Ку йĕрке кăçал та çаплах пулĕ.

Йĕлтĕрçĕсем активлăхпа пуçарулăх кăтартасса, апла пулсан черетлĕ старта тухакансем те йышлăрах пуласса шанатпăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

## Çивиттисене юр пусать

**Асăрхаттару**

Кăçал юр нумай çунăран вăл пӳрт-çуртсен çивиттийĕсем çине те хулăн ларчĕ. Çур еннелле вара вăл нӳрелсе çивиттисене ишесси патне илсе пырать. Кун пек тĕслĕхсем Санкт-Петербургра, Чул хула облаçĕнче пулкаланăччĕ-ха. Халĕ вара кунашкал тĕслĕхсем хамăр республикăна та çитрĕç. Кăрлачăн 30-мĕшĕнче Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Атнар салинче пĕтĕмĕшле врач практикин вăхăтлăх пурăнмалли çурчĕн çивиттийĕ юр йывăрăшне чăтаймасăр ишĕлсе аннă. Телее, çын вилни-аманни пулман.

Кăрлачăн 30-мĕшĕнче çĕрле пирĕн районти Юнкăпуçĕнчи Л. Гаврилова хуçалăхĕнче сарай çивиттийĕ йăтăнса аннă.

Халĕ каланисене шута илсе район çыннисене çывăх вăхăтрах пӳрт-çуртсен çивиттийĕсене юртан тасатассипе тимлеме сĕнетпĕр.

**Н. МИЛЮТИН,**
**районти гражданла оборона тата чрезвычайлă сектор ертӳçи.**

**Килĕшӳ**

## Чăваш хресченĕсемшĕн

Кăрлачăн 27-мĕшĕнче Мускавра Раççей ял хуçалăх министрĕ Елена Скрынник тата Чăваш Ен Президенчĕ Михаил Игнатьев çĕр-шывăн Ял хуçалăх министерствипе республикăн Министрсен Кабинечĕ хушшинчи килĕшӳсене алă пуснă.

Пĕрремĕш килĕшӳре Чăваш Республики валли федераци бюджетĕнчен ял хуçалăх производствине пулăшма 1757,3 миллион тенкĕ субсиди уйăрма палăртнă. Ку вăл 2010 çулхинчен икĕ хут нумайрах. Çав шутран ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине тĕревлеме – 23,4 миллион, ӳсентăран çитĕнтерессине пулăшма – 1068,3 миллион, кредитсен процент виçисене субсидилеме 665,6 миллион тенкĕ уйăраççĕ. Пĕрле çак тăкаксем валли республика бюджетĕнчен те 320,6 миллион тенкĕ уйăрма палăртнă.

Ялăн социаллă аталанăвĕ валли 2011 çулта Чăваш Ене 122,2 миллион тенкĕ хушса парĕç. Çакна тепĕр килĕшӳре палăртнă.

**ЧР ПА пресс-службли.**

**Сирĕн ыйту пур-и?**

## Халăха йышăнать

Суд приставĕсен службин ĕç тытăмĕнче суд процесĕнчи йĕркелĕх, граждансем тĕлĕшпе суд йышăнăвĕсене пурнăçласси, преступленисемпе йĕрке пăсассине профилактикăласси т. ыт. те пур. Çавăнпа та вĕсем тĕлĕшпе районта пурăнакансем те ыйтусемсĕрех мар ĕнтĕ.

Нарăс уйăхĕн 5-мĕшĕнче 9 – 11 сехетсенче суд приставĕсен районти пайĕнче граждансене Чăваш Республикинчи УФССП ертӳçи А. Иванов йышăнать.

**Хамăр инф.**

**Саламлатпăр**




Хамăрăн юратнă аннене, аппана, хаклă тăвана – Çĕньял Муркаш ялĕнче пурăнакан **Раиса Васильевна КУЗЬМИНАНА** тата Çурлатри ялĕнче пурăнакан **Зоя Васильевна КОЛЬЦОВĂНА** сумлă юбилейĕсем ячĕпе чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр сире, хаклă юбилярсем!

**Саламлаканĕсем: ачисем, аппăшĕ, йăмăкĕ, мăнукĕсем, пĕтĕм тăванĕ.**



Юратнăран та юратнă мăшăрăма, аннене, аппана, асаннене – Оринин ялĕнче пурăнакан **Нина Анисимовна ЗАХАРОВĂНА** 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул, иксĕлми телей сунатпăр. Эпир сана, анне, питĕ юрататпăр, санпа мухтанатпăр. Нумай пулмасть аттепе анне пĕрлешнĕренпе 30 çул çитнине уявларĕç, вĕсене иксĕлми юрату сунатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, юратнă мăнукĕ Максим, аппăшĕ тата çывăх тăванĕсем.**



Юратнă çыннăмăра – Вăрманкасси ялĕнче пурăнакан **Мария Романовна ИЛЛАРИОНОВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа пĕтĕм кăмăлтан ăшă туйăмсемпе саламлатпăр. Юбилей ячĕпе сана юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Эпир сана хисеплетпĕр, юрататпăр, пире татах нумай çул савăнтарса пурăнма Турри пиллĕх патăр сана.

**Пысăк салампа: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕ, мăнукĕсем çемйисемпе, кĕçĕн мăнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем тата тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăрсене – Анаткас ялĕнче пурăнакан **Зоя Николаевнăпа Дмитрий Филиппович ФИЛИППОВСЕНЕ** пĕрлешнĕренпе 55 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул сунатпăр. Эсир пурришĕн чунтан савăнатпăр. Сĕтел çинчен çăкăр-тăвар ан татăлтăр, кĕрекĕр яланах тулли те пуян пултăр. Эпир сире юрататпăр. Çывăх çынсен пархатарне курса савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕ, мăнукĕсем, тăванĕсемпе хурăнташĕсем.**



Çĕмĕрткасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, «Ударник» совхозра 40 çул ытла ĕçлесе Чăваш Республикин «Тава тивĕçлĕ механизаторĕ» ят илсе тивĕçлĕ канăва тухнă **Алексей Иванович ИВАНОВА** – юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçине февралĕн 2-мĕшĕнче 65 çулхи юбилейне паллă тунă ятпа чĕререн саламлатпăр. Сурпан пек вăрăм кун-çул, телейлĕ ватлăх, юман пек çирĕп сывлăх, пĕтĕм çĕр çинчи мĕн пур ыррине сунатпăр. Хисеплĕ аттемĕр, татах та нумай çул аннепе иксĕр пире савăнтарса пурăнма сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, 4 хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, 7 мăнукĕ, ял-йыш, хăти-тăхлачисем.**

# Умра – çĕнĕ тĕллевсем

**Учитель çулталăкне вĕçлесе**

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Иртнĕ çул конкурссемпе уйрăмах пуян пулчĕ. Районти «Çулталăкри учитель» професси ăсталăхĕн конкурсĕнчен пуçласа Раççей шайĕ таранах. Акă Нискассинчи вăтам шкул учителĕ М.В. Данилова «Профессире вырăс чĕлхипе ăста усă курнăшăн» конкурсра Раççей çĕнтерӳçи пулса тăнă. Ильинкăри вăтам шкулта ĕçлекен С.К. Яртеева вара Учитель çулталăкне халалланă такмаксен пĕтĕм Раççейри конкурсĕнче çĕнтернĕ. Республикăри тĕрлĕ конкурссен çĕнтерӳçисемпе призерĕсене, ытти паллă мероприятисене хутшăннисене – хастар педагогсене пурне те саламларĕç уявра.

Юлашки çулсенче шкулсене общество енчен тимлĕх уйăрассипе сахал мар ĕç пулса иртет. Район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертсе пыракан канашĕн председателĕ Н.Г. Ванеркин та кун пирки тепĕр хут аса илтерчĕ. Учитель çулталăкĕнче иттернĕ «Хальхи шкул ашшĕ-амăшĕн куçĕпе» конкурсăн районти çĕнтерӳçипе призерĕсене Николай Григорьевич саламласа чысларĕ. Районти çĕнтерӳçĕ – Шомикри тĕп шкулăн ертсе пыракан канашĕ – республикăри призерсен шутне кĕме пултарчĕ. Унсăр пуçне Орининти, Мăн Сĕнтĕрти ертсе пыракан канашсем лайăх ĕçленине те палăртмалла. Çатракасси, Ильинка тата Ярапайкасси шкулĕсенче те ку ĕçе малтанхинчен çӳллĕрех шая çĕклеме пултарни аван.

Хисеплĕ ветеран педагогсене те саламларĕç, учительсен Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçипе çыхăннă истори страницисене те «уçса виларĕç» уявра. Анчах та Учитель çулталăкĕ вĕçленнипе ĕç чакмастьха педагогсен. Çулталăка пĕтĕмлетсе малашнехи ĕçсемпе вĕрентӳ пайĕн ĕçĕсене туса пыракан И.А. Ершова паллаштарчĕ. Умра çĕнĕрен те çĕнĕ тĕллевсем. Пысăк пĕлтерĕшлисенчен пĕри – çĕнĕ стандартпа вĕрентесси çине куçасси. Учительсене аттестацилес ĕçре те çĕнĕлĕхсем кĕтеççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сталинград патĕнче нимĕç фашисчĕсене совет салтакĕсем çапса аркатнăранпа 68 çул çитнĕ май**

# Чĕтренчĕ çĕр, çурăлчĕ – совет салтакĕ пĕрех çĕнтерчĕ



***Шăп паянхи кун 68 çул каялла совет салтакĕсем Сталинград патĕнчи çапăçура нимĕç фашисчĕсене çапса аркатрĕç, хулана пĕтĕмпех тăшмансенчен тасатрĕç. Сайралсах пырать çав паян паттăр салтаксенречĕ. Паян районта çав хăрушă çапăçусене хутшăннă салтаксенчен иккĕн çеç юлчĕç, Муркашра пурăнакан Иван Капитонович Капитонов тата Юнкăри Григорий Никифорович Илугин.***

– Аса та илес килмест вăл вăхăтсене, – ассăн сывлать паян шурă çӳçлĕ ветеран.

19 çултах вилĕмпе юнашар çӳреме пуçланăскершĕн хаяр вăрçă çулĕсене аса илме çăмăл мар пулĕ. 1942 çулхи мартра вăрçа кайма ят тухрĕ Юнкă каччин. Тӳрех вĕсене Краснодарти пулеметчикпа минометчиксене хатĕрлекен училищĕне вĕренме яраççĕ. Нимĕçсем асăннă хула патне çывхарсан вара васкавлă майпах курсант çи-пуçне «хирти» салтак тумтирĕпе улăштармалла пулать. 3 талăк нимĕç пульлисен «çумăрне» чăтса иртернĕ хыççăн Г. Илугин службăра тăракан курсантсен полкне те хушма хĕç-пăшал, боеприпассем параççĕ. Малаллахи çул – Дон патнелле. Ирсĕр тăшман вара пирĕн хуласемпе ялсем патнеллех талпăнса пырать. Астăвать-ха çамрăк салтак тăшмансен çулне пӳлес тесе хамăрăннисем Дон çинчи кĕпере сирпĕтнине те. Вăйсем тан маррине пăхмасăрах чăтнă, тӳснĕ.

– 20-шер патрон паратчĕç, – аса илет Сталинград патне чакса пынă вăхăта Григорий Никифорович.

Паянхи пекех астăвать çав хăрушă çапăçусене.

– 74-мĕш «высота» теттĕмĕр вăл вырăна. Каялла чакма пирĕншĕн «çĕр çукчĕ», – куççульне шăлать ветеран. – Приказсăр пемелле мар. Тăшманăн хăш танкне камăн пемеллине йăлт шутласа-пайласа хутăмăр. Пирĕн пĕр тĕллев – каялла чакма юрамасть, пĕртен пĕр çул – малалла кăна.

4 талăк хушши пĕр чарăнми вилĕм акрĕ фашист, бомба хыççăн бомба çурăлчĕ. Салтаксем кăна мар, тăван çĕр çурăлса ахлатрĕ çав вăхăтра. Артезиан çăлĕ патне тем пек шыв тухса илмелле те. Çук, пуçа çĕклеме те памасть тăшман. Сайралсах юлчĕ салтаксен речĕ. Юрать-ха, Орджоникидзе ячĕллĕ училищĕрен хушма вăй килсе çитрĕ.

Кашни урамшăн, кашни çуртшăн пычĕ çапăçу Сталинград хулинче те.

– Пĕр урамĕ пирĕнччĕ, тепĕр урамĕ – нимĕçсен, – куç умне кăларать çав вăхăта ватă салтак.

Нимĕç чееленсех çитнĕ иккен.

– Пенĕ чух салтаксен вĕри апатлă флягине перетчĕç, – аса илет Григорий Никифорович.

Вĕри апатпа та пĕçертсе ярасшăн пулнă иккен фашистсем совет салтакĕсене.

Çакăнта йывăр аманать пирĕн район каччи. Нумай вăхăт госпитальсенче сипленнĕ хыççăн шăп Сталинграда ирĕке кăларнă кун теппре çапăçăва кĕрет.

Унтан тăшмана Анăçалла хăваласа кайрĕç. Ясы хули патĕнчи çапăçусем те çав тери хаяр пулчĕç.

– Вăл çӳллĕ вырăнта ларатчĕ. Çăмăл пулмарĕ ăна илме. Ман расчет 4 нимĕç танкне пĕтерчĕ, – калаçăва малалла тăсать 3 кун каялла 88 çул тултарнă салтак.

Эх, тăшманăн хăямат пульли. Алăран амантать вăл Юнкă каччине. Çакăнта паттăрла çапăçнăшăн пирĕн ентеше 3 степень Мухтав орденĕпе наградăлаççĕ. Каярахпа «Çапăçури паттăрлăхшăн» медаль тата ытти наградăсем хутшăнаççĕ.

Харьковра госпитальте юсаннă хыççăн запасри полка тухать, унтан танксемпе хирĕç çапăçакан полкра тăшмана хăвалать.

– Ку вăхăтра çĕнĕ йышши хĕçпăшалпа çапăçма пуçларăмăр, – тет салтак. Латви, Литва, Эстони пĕрин хыççăн тепри ирĕке тухрĕ пирĕн паттăр салтаксене пула. Тата тепĕр хут урапа алăран амантаççĕ ăна.

– Шупашкарти Чапаев ячĕллĕ заводра туса кăларнă минăсене илсе килсен «эп чуваш – больше давай», тесе шӳтлеттĕмччĕ, – кулать 90 çула çывхаракан салтак. – Пушка снарячĕсене Çĕпĕртен илсе килетчĕç.

Вăрçă пĕтнĕ хыççăн октябрь праçникне киле таврăнать Г.Н. Илугин. Тăван хуçалăхра тимĕрçĕре ĕçлет. 1952 çулта Етĕрнери ял хуçалăх училищинчен тракториста вĕренсе тухнă хыççăн вăрçăри артиллерист, минометчик трактор штурвалĕ умне ларать, вăрçăпа юхăннă хуçалăха ура çине тăратас ĕçе пуçăнать. 30 çул мĕн тивĕçе канăва тухиччен ех çăкăр çитĕнтерекен профессийĕпе ĕмĕр ĕмĕрлет. Мăшăрĕпе Христина Григорьевнăпа 5 ача çуратса пурнăç çулĕ çине кăлараççĕ. Шел, паян хĕрĕпе ывăлĕ, мăшăрĕ çук ĕнтĕ Григорий Никифоровичăн. 16 мăнукĕпе прамăнукĕ унăн ватлăхне илемлетеççĕ. Çĕнĕ çула вара вăрçă ветеранĕ çĕнĕ хыпарпа кĕтсе илчĕ, пĕр пӳлĕмлĕ хваттер пачĕç ватă салтака районта. Черетлĕ çуралнă кунĕнче вара пысăк çемье кĕрекене ашшĕне, аслашшĕне, кукаçне, хуньашшĕне саламлама пуçтарăнчĕ, Григорий Никифоровича вăрăм ĕмĕр сунчĕ. Мĕн сунни пурнăçлантăрах.

**Л. ПАВЛОВА.**
**Н. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Саламлатпăр**



Юратнă аттене, мачака, кукаçие – Вăрманкас Сурăм ялĕнче пурăнакан **Иван Васильевич ВАСИЛЬЕВА** çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр, таса сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр, ĕмĕрӳ татах та вăрăм пултăр, хаклă çыннăмăр.

**Салампа: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, вун виçĕ мăнукĕ, тăванхурăнташĕсем.**

Отаркă ялĕнче пурăнакан **Олег Сергеевич ЗАХАРОВА** январĕн 30-мĕшĕнче 50 çул тултарнă ятпа В.И. Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ĕçченĕсем чун-чĕререн саламлатпăр. Пурăнас ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху питĕ çирĕп пултăр, телей, вăй-хал сунатпăр. Çемьере, тус-тăвансемпе, ĕçре те яланах паянхи пек ăшă кăмăллă пулма сĕнетпĕр.

**Кашкăрсем тата çын**

# Асăрханулла пулăр!

Таврара кашкăрсем çӳрени пирки сăмах-юмах тĕрлĕрен çӳрет. Апла пулин те районти шалти ĕçсен пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх кăçал пирĕн район территорийĕнче кашкăрсем çынна тапăннă тĕслĕх пулман. Ытти районсенче кашкăрсем ялсем çывăхнелле пынă тĕслĕхсем пулнине палăртнă.

Пĕлтĕр вăрманлă вырăнсенче алхаснă пушарсенчен чĕр чунсем пирĕн тăрăха тарса килнине ăнланмалла. Çавăнпа та асăрханасси пирки манмалла мар. Кашкăрсем выçă пулсан ялсем патнелле пыраççĕ. Çавăнпа та талăкăн тĕттĕм вăхăтĕнче инçе çула çуран тухма кирлĕ мар. Çак чĕр чунсем питĕ выçă пулсан пысăк хунарпа çутатни те, май пур пулсан шав кăларни те пур чухне те вĕсенчен хӳтĕлеймĕ. Наукăра кашкăрсем пĕчĕкрех кĕлеткеллĕ çынсем çине, апла пулсан ачасем çине ытларах тапăнни паллă. Апла кашкăрсенчен сыхланас хăрушсăрлăха илсен те каççерен ачасен урамра е уй варринчи çул çинче пулма кирлĕ марри çирĕп йĕрке пулмалла.

Выльăхсен вите алăкĕсене те, картиш алăкĕсене те йĕркеллĕ питĕрме ан манăр.

**Официально**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**24 января 2011 года №5/1**
**О регистрации кандидата на должность главы Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

Проверив соблюдение требований Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» при выдвижении кандидата на должность главы Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, рассмотрев документы, представленные в Моргаушскую территориальную избирательную комиссию для регистрации кандидата, в соответствии со статьей 24 Закона Чувашской Республики «О выборах в органы местного самоуправления в Чувашской Республике» Моргаушская территориальная избирательная комиссия решила:

1. Зарегистрировать Волкова Сергея Геннадьевича, 1972 года рождения, проживающего в с.Оточево Моргаушского района Чувашской Республики, временно не работающего, выдвинутого в порядке самовыдвижения на должность главы Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики, 24 января 2011 года, 13 часов 15 минут.

Выдать Волкову Сергею Геннадьевичу удостоверение о регистрации установленного образца.

2. Опубликовать настоящее решение в газете «Сĕнтерӳ ялавĕ».

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии Л.Ю. ТАРАСОВА.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

**Редакци почтинчен**

# Кайăксене хĕл каçма пулăшаççĕ

Кашни кунах ытти çынсем пекех ĕçе «Оринино» хуçалăхăн правленийĕ çумĕнчи илемлĕ «Çĕнтерӳ паркĕ» витĕр çӳретĕп. Пĕр ирхине вара çамрăк та яштака илемлĕ пас тытнă йывăç çинче кайăксем валли сырăш çакнине асăрхарăм. Юр нумай пулнă пирки час-часах сивĕсем пулнăран кайăксене çăмăл килмест. Сивĕрен кайăксене тĕкĕсем пулăшаççĕ пулсан выçлăхра вара çын пулăшăвĕсĕр йывăртарах. Пурах иккен пирĕн таврара ырă чунлисем, кайăксен нушине ăнланакансем.

Халĕ çынсем те, шкул ачисем те çак çулпа иртсе çӳреççĕ, кайăксем валли çак сырăша кашни кунах апат хурса параççĕ. Парк вара сырăш çинчи кайăксемпе татах та илемлĕрех. Вĕсем чĕвĕлтетсе апатланни тав сăмахĕ каланăнах туйăнать.

**И. СКВОРЦОВА.**

**Ыйту-хурав**

# Налук саплаштарăвĕ

***Кăрлачăн 22-мĕшĕнчи хаçатра налук саплаштарăвĕ пирки çырнăччĕ. Çавăн хыççăн ку тĕлĕшпе татах та ыйтусем килчĕç. Вĕсем çине хурав тупас тĕлĕшпе Раççей Федерацийĕн Налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинче 6-мĕш № инспекцийĕн патшалăх налук инспекторĕпе Светлана Михайловна Игнатьевăпа çыхăнтăм.***

**Муркаш салинче çĕнĕ çуртра 1 миллион та 200 пинпе хваттер туянтăм. Ун хыççăн вара шалти юсав ĕçĕсемшĕн 300 пин тенкĕлĕх тăкаклантăм. Налук саплаштарăвне мана 1 миллион та 500 пин тенкĕрен шутласа параççĕ-ши?**

**А. ИВАНОВА.**
Муркаш сали.

Çынсем кун йышши ыйтусемпе пирĕн пата та килеççĕ. Хваттер туяннă çыннăн алăра сутилӳ килĕшĕвĕ пулмалла. Енчен те килĕшӳ çинче шалти юсав ĕçĕсем кирлине палăртнă пулсан (требуется черновая отделка) налук саплаштарăвне 1 миллион та 500 пин тенкĕрен шутласа параççĕ. Килĕшӳ çинче юсав ĕçĕ кирлине палăртман тата ăна хăвăр кăмăлпа, ирĕкпе пурнăçлатăр пулсан налук саплаштарăвне 1 миллион та 300 тенкĕрен кăна шутлаççĕ.

**2009 çулта Шупашкар хулинче 560 пин тенкĕпе уйрăм пӳлĕм туянтăм. 2009 çулшăн налук саплаштарăвĕ тивĕçме документсем тăратнăччĕ. Ку тӳлев пĕр çулталăкшăн 17 пин тенкĕ пулни паллă пулчĕ, ăна кĕнеке çине куçарма шантарчĕç. Çав 17 пин тенкĕ ытларахсăр пуçне 560 пин тенкĕрен налук саплаштарăвĕн калăпăшĕ татах та пур вĕт-ха. Ăна 2010 çулшăн деклараци тăратса тавăрса памалла-и?**

**Н. ВАСИЛЬЕВА.**

Çапла, ку тĕслĕхри çыннăн 560 пин тенкĕ саплаштарăвĕ тухса пĕтиччен пирĕн пата çулсеренех деклараци çырса пама тивет.

**Районти прокуратурăра**

# Парăмçăсене куçран вĕçертмеççĕ

Районти прокуратура ĕç укçи тӳлемен, налук енĕпе парăма кĕнĕ организацисен ертӳçисене тĕрĕслесех тăрать. Çавна май прокурор çумĕнче суд приставĕн, налук инспекцийĕн ĕçченĕсенчен тăракан ĕçлĕ комисси йĕркеленĕ. Çапла вара январĕн 18-мĕшĕнче комисси ларăвĕнче тӳлев шайĕ 100 пинрен иртнĕ тата ăна виçĕ уйăх ытла тӳлемен парăмçăсене пăхса тухрĕç.

Комисси ларăвĕнче «Моргаушрайбыт», «МилТрейд», «Удача», «Трасса М-7», «АФ «Лидер» организацисем тĕлĕшпе представлени çырнă.

**Г. ЕРЕМЕЕВА,**
**прокурор пулăшуçи.**

# Хăрушсăрлăх пирки те шутламалла

Прокуратура ĕçченĕсем Москакассинчи «Татнефть – АЗС Центр» 390 № автозаправка станцийĕнче йĕркене пăснă тĕслĕх тупса палăртнă. Ун çывăхĕнче çул урлă каçмалли тата хăвăртлăха кирлĕ пек тытса пымаллине палăртакан йĕрсем çук. Çавăн пекех ун çывăхĕнче ятарлă çутă пулман. Çак пысăк çитменлĕхсем çынсен пурнăçĕшĕн, уйрăмах çурхи-кĕрхи тапхăрта, пысăк хăрушлăх кăларса тăратаççĕ. Çапла вара йĕркене пăснине шута илсе прокуратура суда иск заявленийĕ тăратнă, çитменлĕхсене ултă уйăх хушшинче сирмеллине палăртнă.

**Э. СОКРАШКИН,**
**прокурорăн аслă пулăшуçи.**

# Москакассисен сăвăм ӳсрĕ

***Мукраш енри ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ытти харпăрлăх формисем район администрацийĕн ял хуçалăх пайне талăксеренхи сăвăм пирки оперативлă тăратнă кăтартусемпе районти вăтам сăвăм пĕр ĕне пуçне кăçал пĕлтĕрхинчен 0,7 кг сахалрах. Çав вăхăтрах вăл Е. Андреев яч. хис., Чапаев яч. хис., «Передовик» хуçалăхсенче ӳснĕ.***

***Кунта иртнĕ çуллахи шăрăх çанталăк кăларса тăратнă йывăр ыйтусене татса пама патшалăх пулăшни пирки те каламасăр иртме майĕ çук. Кăрлач уйăхĕн 20-мĕшĕ тĕлне пăхнă тăрăх патшалăхăн тĕрлĕ бюджечĕсенчен районти агропромышленность комплексне пулăшма тата аталантарма 2010 çулта пĕтĕмпе 136,152 миллион тенкĕ килсе çитнĕ. Вăл шутра федераллă бюджетран – 55,529 миллион тенкĕ, республика бюджетĕнчен – 80,623 миллион тенкĕ.***

**Выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен пĕрлехи кунĕнчен**



– Хамăр тăрăшулăх çумне патшалăх пулăшăвне хушсан аталану çулне алăран вĕçертместпĕрех. Çакна эсир хăвăр хуçалăхри ĕç-хĕлтенех куратăр тесе шутлатăп. Иртнĕ çу кунĕсенче тăрăшсах выльăх апачĕ янтăларăр. Çĕнĕлĕхсене алла илсе Ахманери сĕт фермине çĕнĕрен хута ятăр, çĕнĕрен те çĕнĕ ĕмĕтсем çурататăр – çакă йăлтах сирĕн ĕç кăтартăвĕ. Куншăн эпир те сирĕн пекех савăнатпăр, – терĕ «Передовик» ял хуçалăх производство кооперативĕн Сергеевкăри тата Ахманери фермисенче унта ĕçлекенсемпе тĕл пулсан район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Калинин.

Сергеевкăри вăкăрсем самăртмалли фермăра хĕле хатĕрленсе юсав ĕçĕсем ирттерни тӳрех курăнчĕ пулсан та фермăна пыма çул çукки пĕтĕм ӳкерчĕке пăсрĕ.

Ферма заведующийĕ С. Платов сăмахĕнчен выльăхсене çăва кăларма апат çитет. 120 пуç выльăх патĕнче паян пурĕ 5-ĕн ĕçлеççĕ. Ĕçлекенсен тăрăшулăхне курах-тăр вăкăрсем те начар курăнмаççĕ. Тислĕк кăлармалли транспортер юсавлă. Унпа ĕçлекенсем те сарайĕнче тислĕке пухăнса кайма памаççĕ.

Иртнĕ çул вĕçĕнче «Передовиксем» хăйсене валли хăйсем Çĕнĕ çул парни хатĕрлерĕç. Тĕллевлĕ ĕçленипе Ахманере çĕнĕ ĕне сарайĕ хута ячĕç. **(Сăн ӳкерчĕкре комисси çĕнĕлĕхпе паллашать)**. Кунта паян 246 пуç мăйракаллă шултра выльăх тăрать. Вĕсенчен 80-шĕ – сумалли ĕнесем. Çулталăк маларах хуçалăхра сумалли ĕнесен кĕтĕвĕ 59 пуçа çеç юлнăччĕ пулсан, çĕнĕ сарай хута янипе тата выльăхсен йышне хушассипе çине тăрса ĕçленипе Ахманесем сумалли ĕнесен хисепне 21 пуç хушма мел тупрĕç. Çу каçа выльăх апачĕ хатĕрлессипе çанă тавăрса ĕçленĕрен паян ĕнесем умĕнчен апат татăлмасть. Çапла вара ĕне пуçне талăксерен тивекен вăтам сăвăм та çак хушăра икĕ хута яхăн ӳсрĕ. Çулталăк каялла 5 килограмм ытларах сĕт панă ĕнесем паян талăксерен 10,8 килограмм сĕт антараççĕ. Ку вăл районăн вăтам кăтартăвĕнчен 0,5 кг нумайрах.

Аталану çулĕ çине тăнă Ахманесем ĕне сарайĕпе юнашар çывăх малашлăхра пăру сарайĕ тата ĕнесене пăрулаттармалли уйрăм тăвасшăн. «Ĕмĕчĕсем пур-ха, анчах вĕсене пурнăçа кĕртме ĕçлес пулать», – терĕ хуçалăхăн зоотехникĕ Г. Миронова çĕнĕ условисем çĕнĕ ĕмĕтсем çуратни пирки пĕлтерсе.

Çак кун «Восток» хуçалăха та çитсе куртăмăр. Хуçалăх ертӳçи М. Шишокин пире сарайсем тăрăх ертсе çӳренĕ май хуçалăхра техник-осеменатор çукки пысăк ыйту пулса тăни çинчен пĕлтерчĕ. Çакă ĕнесене вăхăтра пĕтĕлентерсе хăвараccине уксахлаттарать. Кун хыçĕнче вара сăвăм тăрать. Паян «Восток» хуçалăх талăксерен ĕне пуçне 9,3 килограмм çеç сĕт сăвать. Ку вăл пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 4,3 килограмм сахалрах.

Кашнийĕнех хăйĕн ыйтăвĕсем. Вĕсене вара пĕрле пулсан çеç татса пама май пуррине те кашниех курса-пĕлсе тăрать.

**А. БЕЛОВ.**

# Улăм сутаççĕ

Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарас тапхăр пырать. Иртнĕ çу кунĕсем шăрăх пулнăран пĕлтĕр çĕр ĕçченĕ выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ янтăлама ĕлкĕреймерĕ. Çакăнпа çыхăннă йывăрлăхсем паян кашни фермăрах, выльăх пăхакан патĕнчех сисĕнеççĕ.

Иртнĕ юн кун, кăрлачăн 26-мĕшĕнче, район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн йĕркелĕвĕпе выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсен пĕрлехи кунĕ иртрĕ. Çак кун эпир ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе тимлекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-завода çитрĕмĕр. Вырăнта хуçалăх иртнĕ çулсенче янтăланă улăма «Герой» тата Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăхсене сутнине пĕлтĕмĕр. Сăмах май Кашмашсемпе Çатракассисем обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисем çывăхне кĕркуннех ытлă-çитлĕ утă-улăм турттарса янтăласа хунă. Кашмашри ĕне ферми çывăхĕнче утă хранилищи пулнăран янтăланă выльăх апачĕ тирпейлĕ упранать. Çакăнпа пĕрлех хуçалăх ыранхи куна пăхса ĕçлесе кӳршĕллĕ Чул хула облаçĕнчен те утă сахал мар турттарса юлма ĕлкĕрнĕ. Çапла вара «Свобода» пĕрлешӳллĕ хуçалăхра хĕл кунĕсене апат енчен лăпкă ирттерме условисем пур.

Ферма территорийĕсенче юсав ĕçĕсене самантлăха та хăй еккипе яманни те хуçалăх çирĕп ура çинче тăнине çирĕплетет. Паян кашни фермăрах юсавçăсен бригадисем ĕçлеççĕ. Кунпа пĕрлех фермăсенче те выльăх-чĕрлĕх пăхакансем çителĕклĕ пулни хуçалăх аталану çулĕпе çирĕп утнине ĕнентерет.

Хуçалăхра выльăхсене пăхнă çĕрте малта пыракан технологисемпе усă кураççĕ. Тĕслĕхрен, пăрусене паян ыраш, сыснасене çĕр улми пĕçерсе çитереççĕ. Пĕчĕк пăрусене ЭКД пани те вĕсен аталанăвне тĕреклетет кăна.

Хуçалăх фермисем тăрăх иртни кунта обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма тĕплĕ хатĕрленнине кăтартса пачĕ. Ăшă, типĕ те таса пӳлĕмсенче çителĕклĕ апатпа тăракан сывă выльăхсем малашне пысăк продуктивлăхпа савăнтарассине кĕтме пулать.

Пĕрлĕхре – вăй. Çакна «Свобода» хуçалăхри выльăх ĕрчетекенсем хăйсен ĕçĕпе çирĕплетсе пыраççĕ. Кунта ӳсĕм никĕсĕнче тăрăшуллă ĕç пулни яр уççăн курăнать.

**И. МИХАЙЛОВА, ăратлăхпа ĕçлекен зоотехник;**
**Л. БОЯРИНОВА, районти ветлаборатори ертӳçи.**

**Специалистпа калаçатпăр**

# Сăмах ăратлă выльăх пирки

***Экономика шав малалла аталаннă май çĕр ĕçĕнче вăй хуракан хресчен те элитăллă тырă-пулăпа пахча çимĕç вăрлăхĕпе, ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе ĕçлессине мала кăларма пуçларĕ. Урăхла епле-ха, куншăн патшалăх пулăшăвĕпе те çителĕклĕ усă курма пулать-çке. Анчах кирек епле çĕнĕлĕх те хирĕçӳллĕ ыйтусем çуратать. Иртнĕ кунсенче хаçат редакцине ăратлăхпа ĕçлекен пĕрлешӳллĕ хуçалăх халăхран выльăх пуçтарса вĕсене ял çыннисене «ăратлă туса» сутни пирки çыру килчĕ. Тĕрĕс-и çакă е тĕрĕслĕхпе тӳр килмест? Çак ыйту çине хурав шыраса район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ăратлă выльăхсемпе ĕçлекен зоотехникĕпе Ирина Ильинична МИХАЙЛОВĂПА тĕл пултăмăр. Пирĕн калаçуран çыру авторĕсем ларутăрăва ăнланса тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тăвасса шанатпăр.***

**– Ирина Ильинична, калаçу пуçламăшĕнче хамăр районти ăратлă выльăх-чĕрлĕхпе ĕçлекен хуçалăхсем пирки кĕскен те пулин паллаштармăр-ши?**

– Паянхи йывăр вăхăтра та районти хуçалăхсем ăратлăхпа ĕçлес çула суйласа илни савăнтарать кăна. Кунта малтанах ăратлă выльăх ĕрчетессипе пĕр çул мар вăй хурса завод ятне илнĕ хуçалăхсене палăртса хăвармалла. Вĕсем: ăратлă сыснасемпе тата мăйракаллă шултра выльăхсен ăратлăхĕпе ĕçлекен «Свобода» хуçалăх-завод тата ăратлă сыснасем ĕрчетессипе специализациленекен Е. Андреев ячĕпе хисепленекен тата мăйракаллă шултра выльăхсен ăратлăхĕпе тимлекен «Ударник» хуçалăх-заводсем. Çак виçĕ хуçалăхсăр пуçне ăратлă выльăхпа ĕçлекен репродукторсем те пур. Кунта сыснасемпе тата мăйракаллă шултра выльăхсем çинче специализациленекен Суворов ячĕпе хисепленекен, тынашкасем ӳстерессипе «Оринино», ăратлă сыснасемпе ĕçлессипе «Герой» хуçалăхсене палăртмалла. Вĕсем хăйсен выльăхĕсене ытти хуçалăхсемпе пĕрлех ял çыннисене те сутаççĕ. Ăратлă выльăх ĕрчетес тĕллевпе çамрăк ăратлă выльăхсене туяннă çыннăн е хуçалăхăн кун пирки патшалăхран субсиди илме документсене тăратмалла.

**– Ăратлăхпа ĕçлекен хуçалăхсен тĕп кăтартăвĕ – ăратлă выльăх сутни. 2010 çул ку енпе мĕнпе асра юлчĕ-ха?**

– Тĕрĕсех каларăр, ăратлă выльăх ĕрчетессипе специализациленекенсем пысăк продуктивлăхлă выльăхсене сутсан çеç патшалăх пулăшăвĕпе усă курма пултараççĕ. Пĕлтĕр çӳлерех асăннă хуçалăхсем ăратлă вăкăрсене 2, тынашкасене 147 (пĕтĕмпе пăхсан виçĕм çулхинчен 21 пуç нумайрах), сысна аçисене 83, сысна амисене 199 (виçĕм çулхинчен пурĕ 407 пуç сахалрах) тата 2 такапа 35 сурăха (виçĕм çул пĕртте сутман) сутма пултарчĕç. Паянхи куна ăратлă выльăх ĕрчетекен хуçалăхсенче ăратлă сысна аçисем 25 пуç тата 90 сысна ами сутлăх тăраççĕ. Уйрăм хуçалăхсемпе илсен кăмăл тăвакансем валли Суворов яч. хис. хуçалăхра 80-шар кг таякан 50 сысна ами, Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра 75-шер кг таякан 10 сысна аçи тата 70-шер кг виçеллĕ 15 ама, «Герой» хуçалăхра 90-шер кг таякан 15 аçапа 70-шер кг виçеллĕ 30 ăратлă ама пур.

**– Ăратлăхпа ĕçлекен пĕрлешӳллĕ хуçалăх халăхран выльăх пуçтарса вĕсене ял çыннисенех «ăратлă туса» сутни пирки мĕн калайратăр?**

– Эпĕ кăна пустуй сăмах тесе калатăп. Ăна калакан ăратлăхпа ĕçлекенсен ĕçне ăнланса çитерейменни курăнать. Выльăхсен ăратлăхĕпе ĕçлекен хуçалăхсенче çав ĕçе зоотехник-селекционерсем туса пыраççĕ. Ăратлă выльăхăн çуралнăранпах хăйĕн карточки пулать. Çак тĕллевпе çамрăк выльăхăнне тӳрех хăлхисене картаççĕ те ашшĕ-амăш камне çырса хураççĕ. Кунпа пĕрлех ăратлă выльăх тĕлĕшпе сыватупа профилактика ĕçĕсем туни те çав хут çине çырăнса пырать. Çак хут пулмасан патшалăхран ăратлăхшăн укçа илесси те кун йĕркинчен тухса ӳкет. Манмалла мар, ĕнесене эпир искусствăлла майпа пĕтĕлентеретпĕр. Ăратлă выльăх вăрлăхĕ вара Чăваш Республикинчи ăратлăхпа ĕçлекен «Чувашское» пĕрлешӳрен килет. Ăна çирĕплетнĕ графикпа икĕ çулта улăштарсах тăраççĕ. Ял çыннисем те ĕнисене çав вăрлăхпах пĕтĕлентернĕрен пирĕн тăрăхра ăратсăр выльăх çукпа пĕрех.

**– Выльăхсене искусствăлла майпа пĕтĕлентерессипе те юлашки çулсенче районта çĕнĕлĕхсем палăрчĕç. Кун пирки мĕн калайратăр?**

– Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть. Çапла вара нумай çĕрте ял çынни ĕнесем ытларах тытма пуçларĕ. Çав хушăрах пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен пĕр пайĕ панкрута тухнипе ял çыннисен ĕнисене искусствăлла майпа пĕтĕлентерсе парасси те «çухалчĕ». Пушаннă çак вырăна паян районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин Турай тата Çатракасси ветеринари участокĕсем йышăнчĕç. Кунпа пĕрлех ĕнесене искусствăлла майпа пĕтĕлентерессипе уйрăм осеменаторсем тимлеме пуçларĕç. Вĕ-сем: Мăн Хураçкара И. Чернова, Шетмĕпуçĕнче В. Сорокина, Ярапайкассинче А. Сядаровпа О. Димитриева, Ильинкăра В. Мерлова, Юнкăра А. Яргунькина, Ярославкăра Н. Яковлева.

Ялсенче ăратлăхпа çанă тавăрса ĕçленĕрен хăш-пĕр ялсенче пурăнакансен выльăхĕсем пĕрлешӳллĕ хуçалăхринчен те лайăхрах курăнаççĕ.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

**Вулакан пултарулăхĕ**

## Уйрăлу саманчĕ

**АВТОРТАН. Пурнăç пурăнасси – уй урлă каçасси мар, тенĕ ваттисем. Çак сăмахсен чăнлăхне вăхăт иртнĕçемĕн ытларах та ытларах çывăха илетĕп. Хам ачамсене, мăнукăмсене ытти хурăнташ-тăвансене те пурăннă чух пĕрпĕрне ытларах юратма, пулăшма чĕнсе калатăп. Ан манăр, пĕрре иртнĕ вăхăта каялла тавăрма çук!**

Шывсăр юхан шыв юхмасть,
Йывăç туратсăр ӳсмест.
Хĕвелсĕр тĕнче илемсĕр,
Аннесĕр ача телейсĕр.
Çуралтăмăр – ӳсрĕмĕр
Пиллĕкĕн пĕр çемьере,
Хуйха-суйха пĕлмесĕр
Атте-анне хыçĕнче.
Савăнатпăр та кулатпăр,
Çитĕнсессĕн – саланатпăр:
Пурте çемье çавăрса
Ачасемшĕн кун кунлатпăр.
Кун иртет те çул юлать,
Çаплипех ĕмĕр иртет.
Ватлăх кунĕ çывхарать,
Чир-чĕр асаплантарать.
Çапла вара ерипен
Тăван т(ă)ванран уйрăлать.
Куççульпе йĕре-йĕре
Тăванпа сыв пуллашать.
Уйрăлсан тин ăнланатпăр
Тăван епле хаклине.
Пурăннă чух ăнланмастпăр
Мĕнле пурăнмаллине...

**Р. СОЛОВЬЕВА.**
Çатракасси ялĕ.

**01 пĕлтерет**

## Хăрушлăх пысăк

2011 çул пуçламăшĕ пушар тухаслăхпа тата вăл кӳрекен инкекпе уйрăмах хăрушлăх кăларса тăратрĕ. Çакна çирĕплетекен танлаштару: пĕлтĕр çулталăкĕпе 37 пушар регистрациленĕччĕ пулсан, кăçал кăрлач уйăхĕ кăна 7 пушарпа палăрса юлчĕ. «Хĕрлĕ автан» ялсенче пурăнакан уйрăм çынсен хуçалăхĕсемсĕр пуçне Муркашри тĕп больницăн стоматологи уйрăмне те кĕллентерчĕ.

Юлашки 7 çула пăхсан тухнă пушарсемпе вут-кăвар тыткăнне лексе пурнăçпа сыв пуллашнисен статистики çаплах: 2004 çулта 39 пушарта 6 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнă, 2005 – 41(0), 2006 – 49(12), 2007 – 54(9), 2008 – 26(2), 2009 – 39(2), 2010 – 37(1). Кăçалхи пĕрремĕш уйăхра вара çулăмра 4 çын пурнăçĕ татăлчĕ: кăрлачăн 1-мĕшĕнче – Отарккăра, 24-мĕшĕнче – Муркаш Шаптакра, 26-мĕшĕнче – Мăн Сĕнтĕрте, 30-мĕшĕнче – Çулавăра. Малтанхи иккĕшĕнче пушар сăлтавĕ кĕске замыкани пулнă пулсан, Мĕн Сĕнтĕрти тĕслĕхре – кил хуçи ӳсĕрле вырăн çинче пирус туртни. Тăваттăмĕшпе тĕпчев пырать.

**И. СМИРНОВ, районти пушар надзор пайĕн пуçлăхĕ.**

# Почтăра тӳлекенсене парне те параççĕ



## Лотерея

***Муркашри почтамтра коммуналлă тăкаксене куллен тӳлесе тăракансем чылайăн. Çут çанталăк газĕпе, электроэнергипе тата шывпа усă курнăшăн пĕр вырăнта укçа тӳлени, паллах, меллĕ. Кунсăр пуçне почтамтра клиентсем валли тĕрлĕ акци ирттереççĕ.***

***Акă пĕлтĕрхи ноябрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 31-мĕшĕччен кунта коммуналлă тăкаксемшĕн укçа тӳлекенсене парне выляса илме май паракан анкетăсене хуравлама ыйтнине астăватăр пулĕ. Çак акци тăрăх республикăри почта ĕçченĕсем Шупашкарта лотерея вылявĕ те ирттерчĕç. Хатĕрленĕ 52 парнерен ытларахăшĕ Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулинче пурăнакансене тухнă. Икĕ парне вара – Муркаш почтамчĕн клиенчĕсене. Муркашри В.М. Софроновăпа (сăн ӳкерчĕкре) Етĕрне районĕнчи З.Т. Иванов ăнăçуллă пулчĕç.***

**Н. АНДРЕЕВА.**

# Çĕнĕ права хăçан параççĕ?

## Ыйту – хурав

**Водительсен çĕнĕ йышши правасем пулаççĕ тенине илтнĕччĕ. Вĕсене хăçан параççĕ-ши? Тата вĕсем мĕнле пулаççĕ?**

**Л. ПАВЛОВ.**

***Ку ыйтăва районти шалти ĕçсен пайĕн çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн ертӳçи В. ВОЛКОВ милици майорĕ хуравлать:***

Кăçалхи мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнса водительсене çĕнĕ правасем пама тытăнаççĕ. Анчах та пурне те пĕр харăс мар. Кивvисен срокĕсем тухнăçемĕн.

Правасем малтанхи пекех 10 çул «ĕçлĕç».

Хальлĕхе водительсен аллинчи правасем икĕ тĕрлĕ. Пĕри – паспорт пысăкăш çиелтен ленка çыпăçтарнă хут, тепри – пĕчĕкрех пластик карточка. Вĕсем иккĕшĕ те вăйра. Иккĕмĕшĕ хаклăрах пулнăран çĕр-шыври чылай регионти çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕсенче пĕрремĕш тĕслĕхлĕ правасем парасси анлă сарăлнă.

Çĕнĕ права та пластик карточка пулать. Вăл тĕрлĕ тĕслĕ: кăвак тĕсрен кĕрен тĕсе куçиччĕнех. Права çинчи штрихкод водитель пирки тулли информаци тытса тăрать. Ун тăрăх документа ăçта, хăçан, мĕн çинче никĕсленсе тата хăш водителе панине пĕлме пулать. Çакăн пек шифр суя документ хатĕрлессинчен тата правана укçалла туянассинчен сыхлама тивĕç. Кунсăр пуçне штрихкод пурри инспектора ытлашши ыйтусемсĕрех водителе тĕрĕслеме май парать.

Праван тепĕр енче «А», «В», «С», «D», «ВЕ», СЕ», «DЕ» категорисене палăртакан пиктограммăсем пулаççĕ. Вĕсем тăрăх, сăмахран, араб çĕр-шывĕсенчи полици ĕçченĕсем тата машинăсене арендăна паракан компанисем хăш водитель мĕнле машинăсемпе çӳреме пултарассине çăмăллăнрах палăртма пултараççĕ. Кашни категорие кăтартакан графана хирĕç водителĕн çак категорипе çӳремелли ирĕклĕхĕн тапхăрне палăртаççĕ. Çакă ĕçе илекеншĕн те меллĕ.

Çĕнĕ тĕслĕхлĕ правасене пама тытăнасси регион шайĕнчен килет. Çавăнпа та пур регионта та мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнса çĕнĕ йышши правасем пама пуçлаççĕ тесе çирĕплетсех калама май çук. Анчах та çулталăк вĕçлениччен пур регионта та çак ĕçе пурнăçлама палăртнă.

**Н. НИКОЛАЕВА ыйтса пĕлнĕ.**

## Шăпа

# «Пушă вăхăт çук»




– Алла шурă хут тытатăп та пĕчĕк-пĕчĕк самолет-кайăксем туса салататăп. Вĕçтеретĕп вĕсене аякка та, çывăх та. Çапла çав, ӳссе çитсен пĕри питĕ аякка кайма пултарать, тепри вара ак çак хам умăма ӳкнĕ самолет евĕр... – сăмахларĕ Алеша кăшт кăна шухăша кайса.

Эпĕ сăмахăма Кӳстерек ялĕнчи Алексей Геннадьевич Павлов пирки пуçартăм. Вăл кашни ача пекех шкулта пĕлӳ пухать, 1996 çулта тустантăшĕсемпе пĕрремĕш хут шкул тенкелĕ çине ларать. Зоя Никандровна вара çав вăхăта паянхи пекех астăвать.

– Ăшă та уяр кунччĕ, тахçанах шкула кайма хатĕрленекен Алеша ир-ирех тăчĕ, аппăшĕсем хатĕрлесе панă чечек çыххине тыткаласа пăхрĕ. Вăл тĕрĕс-тĕкел ӳссе, шкул çулне çитнишĕн хĕпĕртерĕм. Ывăлăм ӳсет-ха, çулсем кайнăçемĕн çемье тĕрекĕ пулать терĕм. Ара арçын ача çине ытларах шанас килет-çке, – терĕ чылай çул хушши тăван хуçалăхра вăй хунă хĕрарăм пĕр самантрах хурланса та, савăнса та.

... Унтанпа чылай шыв-шур юхнă, ырă самант та чылай пулнă. Кулленхи пурнăçа илер-ха, арçын ача ашшĕпе çывăхарах, ӳссе çитсен ун пекех пулма ĕмĕтленет. Анчах та Павловсен кил-йышне, Алеша 17 çул тултариччен, пысăк хуйхă килсе çапать, çемье пуçĕ – ашшĕ – ĕмĕрлĕхех çут тĕнчерен уйрăлать. Хуйхă хĕрарăма самай пусăрăнтарать, пĕтĕм йывăр ĕç ун черченкĕ хул пуççийĕ çине тиенет. Юрать-ха çемьери пилĕк ачи кирек епле ĕçе те парăнтарма пултарать. Пусăрăнчăк кăмăл пулсан вĕсемпе чуна уçса каласма пулать.

Çапла вара Зоя Никандровна ачисене ӳстерессишĕн, вĕсене тивĕçлĕ пĕлӳ парассишĕн куннесĕрне пĕлмесĕр тăрăшать. Людмила хĕрĕ Шупашкарти кооператив институтĕнче вĕренет. Люба вара Чăваш патшалăх университетĕнче пĕлӳ илнĕ хыççăн Муркаш районĕн шалти ĕçсен пайĕнче вăй хурать. Çемьери кĕçĕн ачи Саша Шупашкарти электромеханика колледжĕнче пĕрремĕш курсра пĕлӳ илет.

Ашшĕ-амăшĕ çĕр ĕçĕпе пиçĕхсе ӳснĕрен ачисене те ял хуçалăх ĕçне хăнăхтарнă. Мĕн пĕчĕкренех ĕç çумне çыпăçнăскерсем çуллахи каникул вăхăтĕнче те вăхăта усăллă ирттерме тăрăшнă, тăван хуçалăхра тимлесех ĕçленĕ. Анчах та хуйхă-суйхă тени пĕччен çӳремест иккен. Уй-хирте вăй хунă чух Алешăпа кĕтмен инкек пулса иртет, йывăр тиев айне пулать, урине йывăр амантать. Арçын ачана синкерлĕх чылай вăхăт хушши больницăн тăвата стени хушшине калăплать. Çапла вара унăн пурнăçĕ те самай улшăнать, анчах та ырă еннеллех теейĕмĕн.

– Тĕрĕссипе вара манăн вăл вăхăта аса та илес килмест. Ытти кунхи пекех çĕкленӳллĕ кăмăлпа ĕçе тухрăм. Анчах та ăшăмра лăпках марччĕ, çапах та ăна кăна пăхмасăр ĕçеваскарăм. Ĕçлесен пурăнма пулать вĕт. Ун пирки пире аттепе анне яланах аса илтернĕ. Август уйăхĕн 6-мĕшĕ вара маншăн ытла та хăрушă кун пулса тухрĕ, манăн пурнăç тĕпрен улшăнчĕ. Эпĕ ĕçе те чупаттăмччĕ, тус-тантăшсемпе шыва кĕме те васкаттăмччĕ! Акă халĕ вара йăлтах урăхла-çке. Эсир те куратăр ĕнтĕ эпĕ ак ларатăп кăна, – терĕ Алеша пуçне пĕкнĕ майăн. Çапах та куççульне палăртмарĕ, чунĕ самай хурланчĕ пулин те.

Мĕн ачаранах çутă малашлăх пирки тĕлленетпĕр пулин те шăпа тени тĕрлĕрен килсе тухать çав. Çапах та Турри пӳрнипе çырлахса пуçа çĕклесе малаллах талпăнни аванах курăнать унăн çитĕнĕвĕсенчен. Алеша ав пĕрре те ахаль лармасть, тăтăшах хăйне кăсăклине тупать. Спорт енĕпе хăйне самай аталантарчĕ, çӳллĕ шая çĕкленчĕ. Çĕнĕ Шупашкарта ирттернĕ инвалидсем хушшинчи сĕтел çи теннисĕн ăмăртăвĕнче диплом çĕнсе илчĕ. Çавăн пекех теннис енĕпе районсем хушшинче пулнă ăмăртура пĕрремĕш вырăна тивĕçрĕ. Дартс вăййинче те ăсталăх кăтартма пултарчĕ Алеша, унта та малтисен шутĕнче пулчĕ. Тĕрĕссипе вара унăн çитĕнĕвĕсем татах та пур.

– Эпĕ хамăн çывăх çыннăмсене питĕ пысăк тав сăмахĕ калатăп. Вĕсем мана тĕрлĕ енлĕ пулăшсах тăраççĕ. Районта е ытти çĕрте пулса иртекен мероприятисене илсе тухаççĕ. Эпĕ çапла майпа хам пек йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ çынсемпе курса калаçатăп, чуна уçатăп, – терĕ вăл сăмахне вĕçленĕ май.

**Р. МАКАРОВА.**

## Спорт афиши

# Г. Лукинăн парнисемшĕн

Февралĕн 11-мĕшĕнче Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулăн спортзалне волейбол вăййин тусĕсене йыхравлаççĕ. Çак кун волейбол вăййин ветеранĕн Георгий Егорович Лукинăн куçса çӳрекен кубокне тата парнисене çĕнсе илессишĕн волейбол ăмăртăвĕ иртет. Районти шкул ачисен волейбол командисене вăйăра вăй виçме чĕнеççĕ. Ăмăрту 11 сехетре пуçланать.

# Арçын ветерансене чĕнеççĕ

Февралĕн 12-мĕшĕнче «Сывлăх» ФСК-ра районти арçын ветерансен командисем волейболла выляса ăмăртĕç. Вăйăсем 10 сехет çурăра пуçланаççĕ. Спортăн çак енне кăмăллакансене 40 урлă каçнисен вăййине курма Муркаша чĕнетпĕр.

# «Раççейĕн олимп шанчăкĕ»

Çак ятпа ирттерме палăртнă пĕтĕм Раççейри ăмăртăва пирĕн районти çамрăк спортсменсем путевка çĕнсе илме пултарнă. Светлана Ивановăпа Алексей Харьков (тренерĕ – И.В. Смирнов) иртнĕ канмалли кунсенче Шупашкарта йĕлтĕрçĕсен республика шайĕнчи ăмăртура палăрнă. Светлана ирĕклĕ майпа тупăшса 3 вырăна тухнă. Алексей ирĕклĕ майпа тупăшса 4-мĕш, классика мелĕнче 5-мĕш вырăн çĕнсе илнĕ. Çак кăтартусем вĕсене пĕтĕм Раççейри ăмăртăва хутшăнма май параççĕ. Ăнăçусем сунатпăр!

**Хамăр инф.**

## Тав тăватпăр

Пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнче пирĕн ĕне чирлесе ӳкрĕ. Ветеринар тăрăшни те пулăшаймарĕ. Ĕнене аша пама тиврĕ. Юрать-ха ĕнене июль уйăхĕнче «Поддержка» патшалăхăн страхлакан компанире страхланăччĕ. Ĕнене аша пани страхланă укçа сумми чухлĕ пулмарĕ. Çапла вара страхланă суммăна çитерсе «Поддержкăран» укçа та илтĕмĕр. Страхлакан агента тата çак компанире ĕçлекенсене пире пулăшнăшăн тав сăмахĕ калатăп. Ĕçре çитĕнӳсем сунатăп.

**В. ВАСИЛЬЕВА. Отарккă ялĕ.**

Мăшăра, ывăла, шăллăма, аттене, Ятман ялĕнче пурăннă Сергей Георгиевич Агапова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пайланăшăн Муркашри больница коллективне, «Березка» ясли-сад ĕçченĕсене, тăвансене, юлташсене, кӳршĕсене, ялйыша чĕререн тав тăватпăр.

**Агаповсен çемйи.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Ĕне, вăкăр, пăру туянатăп.
Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 7-8.**

* * *

**Закупаем бычков, телок, коров, свиней (живым весом).
Тел.: 8-905-343-46-23, 60-7-05. 5-5.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.
Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 6-10.**

* * *

**Для уборки территории предприятия в с. Моргауши требуется мужчина из числа жителей с. Моргауши, д. Шептаки, Синьял Моргауши. Тел.: 8-906-382-36-45.**

* * *

**РЕМОНТ И ОБСЛУЖИВАНИЕ КОМПЬЮТЕРОВ
Установка, переустановка ОС, настройка, удаление вирусов, sms-блокеров, восстановление информации, выезд на дом. Тел.: 8-906-386-93-47.**

**Продаем доски хвойные 25х150мм, 50х150мм, 50х200мм; брус любого сечения. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел.: 8-903-346-40-58. 10-10.**


**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:984, местоположение установлено относительно ориентира, расположенного в границах участка. Почтовый адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ
**Матрена Даниловна
ДАНИЛОВА**
пенсионерка, ĕç ветеранĕ вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ
**Григорий Никитич
НИКИТИН**
пенсионер вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Çатракассинчи вăтам шкул коллективĕ кунта нумай çул биологи предметне вĕрентекен Н.Н. Ильинан **КУКАМĂШĔ** вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланса пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 01.02.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4275.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.